**Задача**

Вăт задача!
Ку задача
Калама çук хĕн иккен.
Пĕр хушатăп,
Пĕр хутлатăп,
Шутласа тухать тинке.
Павăл килнĕ,
Сантăр килнĕ,
Тухчĕ теççĕ выляма.
Çук, тухмастăп,
Тапранмастăп,
Пăрахмастăп шутлама.
Кил-ха, лар тет,
Апатлан тет,
Чунтанах чĕнет анне.
Çук, пымастçп,
Тапранмастăп
Тупиччен ун тупсăмне.
– Пулăшам-и,
Хам шутлам-и, –
Тет Санюк аппа мана.
– Çук-ха тетĕп,
Чим-ха тетĕп,
Ман шутласчĕ хамăнах!
Ак хутлатăп,
Ак пайлатăп,
Тĕрĕслетĕп суммине.
Вăт задача,

Ку задача,

Пурпĕр тупрăм тупсăмне!

*Алентей, В. Задача : [сăвă] / В. Алентей // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 167-168.*